28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1943 АПРЕЛЬ 18 ВЫРСАРНИКУН 83(6320) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Май уявӗ умӗнхи ăмăртăва çӗнӗ вăйпа сарса пырар!

Аслă уяв умӗнхи социализмлă ăмăртăвăн участникӗсем — республикăри малта пыракан предприятисемпе артельсем, колхозсемпе МТС-сем, финанс органӗсем хăйсем çине илнӗ обязательствăсене пурнăçа кӗртессишӗн вăя хурса кӗрешеççӗ.

Чăваш республикинчи предприятисен Май уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăртăвне пуçарнă коллектив — Бунин юлташ директор заместителӗ пулса ӗçлекен завод — март уйăхӗнчи программăна ăнăçлăн вӗçлерӗ, пӗрремӗш кварталти тата март уйăхӗнчи заказсене срокчен пурнăçларӗ, ВЦСПС-па пӗр Халăх Комиссариачӗн февраль уйăхӗнче илнӗ куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне хăй аллинчех çирӗплетсе хăварчӗ.

Çӗмӗрлери «Большевик» завод март уйăхӗнчи ӗçшӗн ВЦСПС-па çăмăл промышленность Халăх Комиссариачӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне илчӗ. Завод планран ирттерсе 15 процент чухлӗ продукци кăларнă, ӗç тухăçлăхне 57 процент ӳстернӗ.

Март уйăхӗнчи ӗçшӗн республикăри вырăнти промышленноçăн чылай предприятийӗсемпе промысла артельсене — 5 промкомбината, 5 артеле Чăваш АССР Совнаркомӗ премисем пачӗ, 11 промкомбинат, 42 артель лайăх ӗçленине палăртрӗ. Районсенчи промышленноçпа республикăри промысла кооперацийӗ, пӗтӗмӗшпе илсен, март уйăхӗнчи плана тултарчӗç.

Анчах пирӗн юлса пыракан предприятисемпе артельсем, малта пыракан предприятисенче — юлса пыракан цехсемпе сменăсем тата уйрăм бригадăсем пур-ха. Сăмахран, Канашри вагонсем юсакан заводах илер. Вăл 1942 çулăн вӗçӗнче тата кăçалхи пӗрремӗш кварталта хăйӗн ӗçне сӳрӗклетрӗ. Завод дирекцийӗн заводри партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен Май уявӗ умӗнхи ăмăртура мала тухса хисеплӗ вырăн йышăнассишӗн пӗтӗм вăя хурса кӗрешмелле. Анчах çакă вăл халлӗхе çук-ха. Заводри рессорсем тăвакан, тимӗрç тата вагон ураписем тăвакан цехсем начар ӗçлеççӗ. Рессорсем тăвакан цех апрелӗн малтанхи кунӗсенче графика çурри те тултарса пыраймарӗ. Тимӗрçӗ тата механически цехсене йӗркеллӗ ӗçлеттерес тесен, инструментальнăй цеха тикӗс ӗçлеттермелле. Анчах инструментальнăй цех заводра халӗ те «хӗсӗк вырăн» пулса тăрать-ха.

Завода тикӗс ӗçлекен предприятисен ретне тăратас пулать. Çакна тăвас тесен, завод руководителӗсен чи малтанах материалсемпе техника парса тăракан тата транспорт цехӗсен ӗçне лайăхлатмалла, цехсене кирлӗ материалсемпе чӗртавара çителӗклӗ таранах тата вăхăтра парса тăмалла, завод транспорчӗпе — вертушкăпа — тӗрӗс усă курмалла, — çаксене пурнăçлассишӗн пуринчен малтан транспорт цехӗпе техснабра ӗçлекенсен çине тăрса кӗрешес пулать.

Заводра ӗçе кӗртмен майсемпе ресурссем чылай-ха: кивӗ пайсене юсамалла, производство отхочӗпе туллин усă курмалла, перекетлӗх режимне çирӗп тытса пымалла, рационализаторла ӗçе çӗнӗ вăй кӳрсе вăйлатмалла.

Апрель уйăхӗ — продукци кăларассине малалла ӳстерсе пымалли уйăх пулса тăмалла. Предприятисемпе артельсен **апрель уйăхӗнче плана пӗтӗм продукци кăларас тӗлӗшпе çеç мар, ăна пур йышши таварсем кăларас енӗпе те ăнăçлăн тултарассишӗн** кӗрешмелле. Вырăнти промышленность предприятийӗсемпе промартельсен куллен кирлӗ таварсем кăларас ӗçе ӳстермелле.

Партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен, предприятисемпе артельсен руководителӗсен Май уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăртăва çӗнӗ вăйпа сарса пымалла. Вӗсен ăмăртăва хутшăнса илнӗ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишӗн, продукци кăларассине малалла ӳстерсе пырассишӗн пуçланнă кӗрешӳре рабочисен мӗнпур массине çӗнӗ çӗнтерӳсем патне хавхалантарса ертсе пымалла.

Ӗç тухăçлăхне тата продукци кăларассине ӳстерсе пырас шухăш-кăмăлпа çунса тăракан совет патриочӗсем Май уявӗ умӗнхи хисеплӗ вахтăсене тăраççӗ. Партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен, коммунистсемпе комсомолецсен çав ӗçре пуçарулăх кăтартмалла, мӗнпур массăна ертсе пымалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Апрелӗн 16-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 16-мӗшӗнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелӗн 15-мӗшӗнче фронтăн тӗрлӗ участокӗсенче пирӗн авиаци чаçӗсем нимӗçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине тата 5 танкӗнчен кая мар пӗтерсе тăкнă е сиенленӗ, тăшманăн зенитнăй батарейине пусарнă.

* * *

Кубань çинче пӗр соединенин чаçӗсем тăшманăн контратакисене сире-сире пынă. Пӗр участокра йышлăрах вăй пухнипе тăшман ирхине пӗр высотана йышăнса илме пултарнă. Каç пулнă çӗре пирӗн боецсем гитлеровецсене ывăтса ярса, паллă вырăн йышăнса тăракан çав высотана тепӗр хут йышăнса илнӗ. Тепӗр участокра нимӗçсем пехотăн 2 полк вăйӗпе тата 50 танк пулăшнипе темиçе хут та контратака тума хăтланнă. Тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, ăна пысăк çухатусем кӳнӗ.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пӗр участокра нимӗçсем çапăçăва пехотăн 2 батальонне, мотоциклет батальонне, 6 танк тата хăй тӗллӗн куçса çӳрекен 5 туппа кӗртсе янă. Артиллерирен персе тăнипе тата хирӗç контратакăсем тунипе пирӗн подразделенисем гитлеровецсене пысăк çухату кӳрсе каялла чакарнă. Çапăçура тăшманăн 300 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тăкнă, нимӗçсен 4 танкне тата хăй тӗллӗн çӳрекен 2 туппине персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Хӗвеланăç фронтӗнче пирӗн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирӗплетнӗ. Пӗр чаçри разведчиксен отрячӗ тăшман тылне кӗрсе кайнă та фронт линийӗ патне пыракан çар эшелонне ӳпӗнтерсе янă. Крушени вăхăтӗнче паровоз тата çар техники тиенӗ 25 платформа арканнă. Тепӗр отрядри боецсем тăшман тылӗнче шоссе çулӗ çинчи 2 пысăк кӗпере сирпӗнтернӗ.

* * *

Белгород районӗнче засадăра тăракан гварди лейтенанчӗн Федоровăн танкӗ çул çинче тăшманăн 3 танкне асăрханă. Лейтенант малта пыракан танка пеме пуçласа ăна персе çӗмӗрнӗ. Нимӗçсен ытти 2 танкӗ каялла çавăрăннă та тарса пытанма хăтланнă. Совет танкисчӗсем вӗсене хăваласа çитнӗ те 2 танкне те çунтарса янă.

* * *

Çурçӗр-хӗвеланăç фронтӗнче старши лейтенант Гусак ертсе пыракан артиллери подразделенийӗ 5 дзота тата 6 блиндажа аркатнă, тăшманăн 8 пулеметне пӗтерсе тăкнă. Лейтенант Куренкин ертсе пыракан подразделенин зенитчикӗсем нимӗçсен «Хейнкель—111» самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Ленинград облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ апрелӗн 5-мӗшӗнче халăх пурăнакан пӗр пунктра тăракан нимӗç гарнизонне тапăннă. Партизансем çыхăнăва татнă, хуралçăсене вӗлернӗ те нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсене сасартăк тапăннă. 40 гитлеровеца вӗлернӗ, 11 автомашинăна пӗтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпӗнтернӗ. Тепӗр отрядри партизансем нимӗçсен фашистла оккупанчӗсене турттарса пыракан эшелона ӳпӗнтерсе янă. Паровоза тата боеприпассемпе тӗрлӗ çар хатӗрӗ тиенӗ 7 вагона аркатса тăкнă.

* * *

Нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем Курск облаçӗнчи Ивня ялӗнче мирлӗ совет гражданӗсене 138 çынна вӗлернӗ. Вӗлерес умӗн нимӗç палачӗсем вăл çынсене тискеррӗн асаплантарнă. Башмаковăпа Наумова совет работникӗсене нимӗçсем çакса вӗлернӗ. Фашистсем граждан вăрçи геройне Кирилл Ельцов орденоносеца тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ. Бандитсем малтан ăна уриаллинчен пенӗ, пуçне çапса çӗмӗрнӗ, юлашкинчен персе пăрахнă. Хӗнесе асаплантарса пӗтернӗ «Красный кооператор» колхоз председательне Филипп Ховякова гитлеровецсем 3 хутчен çакнă, темиçе минута çакăнса тăнă хыççăн каллех çӗре антарнă. Беликов колхозникăн ывăлне гитлеровецсем хулӗсене туртса кăларнă, пуçне çапса çурнă. Каялла чакас умӗн нимӗçсем 600 çынна сарая хăваласа хупнă та вӗсене апатсăр тата шывсăр асаплантарса виçӗ кун хушши питӗрсе тăратнă. Çав совет çыннисене пурне те гитлеровецсем Германие каторгăна илсе кайма шутланă пулнă, анчах та çав ӗçе тума ӗлкӗреймен. Пырса çитнӗ Хӗрлӗ Çар чаçӗсем колхозниксемпе колхозницăсене фашистла чурăлăхран хăтарнă.

Апрелӗн 17-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Апрелӗн 17-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хӗвеланăç фронтӗнче пирӗн чаçсем тăшмана хирӗç артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăнă. Пирӗн артиллери тăшманăн 6 дзотне аркатса тăкнă тата икӗ оруди, темиçе миномет пӗтерсе тăкнă. Пӗр чаçăн 9 снайперӗ 19 нимӗçе вӗлернӗ. Тепӗр подразделенири снайперсем лейтенант Соколов тата Григорьевпа Рязанов красноармеецсем 9 гитлеровеца пӗтерсе тăкнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирӗн разведчиксен пӗчӗк ушкăнӗ тăшман тăракан вырăна кӗрсе кайса, шоссе çулӗ çинче засада тунă. Çул çинче часах нимӗç обозӗ килни курăннă. Тăшмана çывăха ярса, разведчиксем обоза тапăннă та нимӗçсене вӗлерсе тăкса, лашасем, грузсем тытса илсе, пӗр çухату тумасăрах хăйсен подразделенине таврăннă. Пӗр соединенин летчик-штурмовикӗсем чугунçул станцине атакăланă. Çавăнта вӗсем тăшманăн боеприпассем тиенӗ 6 вагонне, паровозне тата 15 автомашинине пӗтерсе тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирӗн чаçсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Нимӗç пехотин 120 салтаклă отрячӗ çӗрле пирӗн оборона хушшине шăтарса кӗнӗ. Пӗр чаçăн боецӗсем гитлеровецсен çав отрядне хупăрласа илсе, ушкăнӗпех пӗтерсе тăкнă. 6 станковăй пулемет, 10 ручной пулемет, 15 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнӗ.

* * *

Чугуевран çурçӗртерехре пирӗн артиллери нимӗçсен 4 дзотне аркатнă, миномётсен 2 батарейине пусарнă тата нимӗç пехотин пӗр батальонне сапаласа янă. Пӗр чаçăн разведчикӗсем тăшман тăракан вырăна пырса кӗрсе, темиçе гитлеровеца тыткăна илнӗ.

* * *

Кубань çинче Петренко тата Покосов летчик-истребительсем нимӗç бомбардировщикӗсен ушкăнне атакăланă та темиçе минута хушшинчех «Юнкерс-88» йышши икӗ самолета персе ӳкернӗ. Гварди капитанӗ Покрышкин юлташ пиллӗк çулте нимӗçсен 4 истребительне асăрханă; вӗсемпе çапăçса, тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Автоматлă тупăсемпе хӗçпăшалланнă нимӗçсен карательнăй экспедицийӗ Чернигов облаçӗнчи партизансен отрядне хупăрласа илсе пӗтерсе тăкма хăтланнă. Совет патриочӗсем гитлеровецсене çывăха янă та засадăран пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуçланă. Çав çапăçура партизансем 80 нимӗçе вӗлернӗ, 24 çынна тыткăна илнӗ. Тытса илнӗ трофейăсем хушшинче 2 оруди, 6 пулемет, 26.000 патрон, радиостанци тата ытти çар хатӗрӗсем те пур.

* * *

Нимӗçсен артиллерин 21-мӗш полкӗнчи 5-мӗш батарейăран тыткăна лекнӗ лейтенант Вернер Фельке çапла каласа панă: «Эпӗ Гроссборнри лейтенантсен шкулӗнче вӗрентӗм. Хӗвелтухăç фронтӗнче авиаполевой дивизи командирӗ пулса ертсе пынă генерал-лейтенант Майнзель шкулта пире Российăра вăрçассин уйрăмлăхӗсем çинчен лекцисем вуласа паратчӗ. Уйрăмăнах Майнзель партизансене хирӗç кӗрешессин йывăрлăхӗсене палăртатчӗ. Вăл çапла калатчӗ: партизансем чи паллă коммуникацисене аркатаççӗ, обозсене тата гарнизонсене тапăнаççӗ, тетчӗ. Юлашкинчен вăл çапла каларӗ: тивӗçлӗ мерăсем йышăннă пулин те, партизансене пӗтерме пултараймарӗ, ку çеç мар, Российăра партизансен групписен кӗрешӗвӗ анлăрах та анлăрах сарăлса пырса, нимӗç армине пысăк сиен кӳрет, терӗ».

* * *

Аяларахра нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем Ленинград облаçӗнчи Калита ялӗнче тискер ӗçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпӗр: «Пирӗн яла йышăнса илсенех гитлеровецсем ялти çынсене пурне те çаратса тухрӗç. Нимӗç оккупацийӗ вăхăтӗнче ялта 150 çын выçăпа вилчӗç. Хресченсене вăрмана кайма та чаратчӗç. Нимӗç палачӗсем вăрманта хăрăк турат пуçтаракан Василий Ширяева, Авдотья Трофимовăна, Александра Багровăна, Антонина Ивановăна, Михаил Блинова, Анна Быстровăна тата ытти çынсене те персе пăрахнă. Каялла чакнă чухне гитлерла çынвӗлеренсем яла вут тӗртсе хăварнă. Пушар пухнипе 46 пӳрт, тата ытти çуртйӗрсем те çунса кайнă». Акт çине çаксем алă пуснă: Иван Стулов, Е. Стулова тата ял çыннисем ыттисем те.

Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне илни пире кăçал татах та лайăхрах ӗçлеме хушать

Хӗрлӗ ялав лайăхрах ӗçлеме хавхалантарать

Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне парса наградăлани пире выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçре чаплă çитӗнӳсем тума хавхалантарать. Айкăш ялсоветӗнчи «Чăваш Коммуни», «Красный кавалерист» тата Киров ячӗпе тăракан колхозсем çак савăнăçлă хыпара пысăк хавхаланупа кӗтсе илчӗç. Пирӗн ялсоветӗнчи колхозниксем, кохозницăсем Сталин юлташăн паха чӗнӗвӗсемпе хавхаланса ӗçлесе, иртнӗ çулта чылай пысăк çитӗнӳсем турӗç. 1942 çулта ялсоветӗнчи пур колхозсем те выльăх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана иртерсе тултарнă. Киров ячӗпе тăракан колхозра мăйракаллă шултăра выльăхсем ӗрчетмелли плана 114 процент, «Красный кавалерист» колхозра 120 процент, «Чăваш Коммуни» колхозра 117 процент тултарнă. Сыснасем ӗрчетес тӗлӗшпе те Киров ячӗпе тăракан колхозра пысăк çитӗнӳсем тунă. 1943 çулти январӗн 1-мӗшӗ тӗлне колхоз ферминче план тăрăх 50 пуç сысна пулмалла пулсан, халӗ фермăра 152 пуç сысна пур.

Выльăх-чӗрлӗхӗн продуктивноçне ӳстерес тӗлӗшпе те пирӗн ялсоветӗнчи колхозсен çитӗнӳвӗсем пысăк пулчӗç. Кашни ӗнерен çулталăк хушшинче 1.100-шер литр сӗт суса илнӗ, кашни сурăхран 3-шер килограмм çăм касса илнӗ, 1942 çулта кашни чăхран 100-шер çăмарта пуçтарса илнӗ. Фермăсенче выльăх-чӗрлӗхсем вилни иртнӗ çул пачах пулмарӗ. Кăçал та пӗр выльăх та вилмен. Çак результатсене эпир выльăхсене тӗрӗс пăхнипе тунă. Кăçал эпир фронтовиксен çемйисене 115 сысна çури, 400 чăх парса пулăшрăмăр. Халӗ тата нимӗç оккупанчӗсенчен ирӗке кăларнă районсенчи колхозсене валли 10 пуç сысна, 3 ӗне, 10 сурăх уйăртăмăр. Вӗсене эпир лайăх тăрантарса самăртса ярса паратпăр.

Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне пани колхозниксен хаваслăхне ӳстерчӗ. Эпир выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçре те, вăйлă тырпул туса илес тӗлӗшпе те кăçал ырми-канми ӗçлеме тăрăшăпăр.

П. Ананьев,
Айкăш ялсовет исполкомӗн председателӗ.

ШУПАШКАР ХУЛИ

ВКП(б) Обкомне — ЧАРЫКОВ юлташа, Совнаркома — МАТВЕЕВ юлташа.

Колхозсенче выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçре чаплă çӗнтерӳсем тунăшăн республикăна Оборонăн Государственый Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата иккӗмӗш преми памалла тунă ятпа ВКП(б) Чăваш Обкомӗпе Совнаркома чӗререн ырă сунса саламлатăп.

Ялхуçалăхӗнчи социализмлă ăмăртура малта пыракансем, партипе совет организацийӗсем ертсе пынипе, халиччен хи çитӗнӳсене çирӗплетсе, выльăх-чӗрлӗхсен йышне тата вӗсен тухăçлăхне ӳстерессишӗн пыракан кӗрешӳре 1943 çулта татах та пысăкрах çитӗнӳсем тăвӗç тесе шанатăп. Çав çитӗнӳсем республикăри сӗт-çу промышленноçне малалла аталантарма тата тӗп задачăна — фронтпа çӗршыва паха аш-какай, сӗт-çу çимӗçӗсем ытларах туса парассине пурнăçа кӗртме май параççӗ.

ССР Союзӗн Наркоммясомолпромӗ СМИРНОВ.

ШУПАШКАР ХУЛИ,

Çӗрӗç Халăх Комиссарне МАЛОВА.

РСФСР Наркомземӗ колхозсенче выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вăйлатнăшăн Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата иккӗмӗш преми илме тивӗçлӗ пулнăшăн колхозниксемпе колхозницăсене, зоотехникăпа ветеринари тата çӗрӗç органӗсен работникӗсене тав тăвать. Тăшмана аркатса тăкассине хăвăртлатмашкăн, нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсене хăмăр çӗршыврăн хăваласа кăлармашкăн çӗршывпа фронта ялхуçалăх продукчӗсем ытларах тата промышленность валли чӗртавар ытларах парас тесе выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вăйлатассишӗн, вăйлă тырпул туса илессишӗн пыракан кӗрешӳре сире малашне те ăнăçусем тума сунатпăр.

РСФСР Наркомземӗ
ЖИЛЬЦОВ

Награда çӗнӗ çитӗнӳсем тума чӗнет

КӲКЕÇ, апрелӗн 17-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Республика Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата иккӗмӗш преми илни çинчен калакан савăнăçлă хыпар районри пур колхозсене те хăвăрт çитрӗ. Ӗнерпе паян колхозсенче митингсем пулса иртрӗç. Колхозниксемпе колхозницăсем митингсенче партипе правительствăна 1943 çулта тата тухăçлăрах ӗçлеме, республика илнӗ аслă наградăна ялхуçалăх ӗçӗнче çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе çирӗплетме сăмах пачӗç.

Иккасси ялсоветӗнчи «1-ое Мая» колхоз членӗсем митингра республика Хӗрлӗ Ялав илнине çуракине кӗске срокра тата лайăх туса иртернипе, государство умӗнчи обязательствăсене срокчен парса татнипе ответлеме пулчӗç.

Колхоз государствăна аш-какай памалли кăçалхи обязательствăна тахçанах тултарнă, сӗт обязательствине пӗрремӗш кварталшăн парса татнă, çавăн пекех çăмарта памалли обязательство та ăнăçлăн пурнăçланса пырать.

В. Караушев,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Клевер акмалли плана тултармалла

Шăхасан районӗнчи чылай колхозсем клевер акмалли плана пурнăçларӗç, паянхи куна пурӗ 820 гектар çине клевер акса хăварнă. Государство планӗ тăрăх кăçал пурӗ 1.200 гектар çине клевер акмалла. Çак плана вăхăтра пурнăçа кӗртмелле. Анчах хăшпӗр колхозсем халӗ те клевер вăрлăхне хатӗрлес енӗпе япăх ӗçлеççӗ-ха. «Соревнование» колхозăн ,акă, кăçал 22 гектар çине клевер акмалла, анчах вăл халӗ 3 гектар çеç акнă-ха. Колхоз председателӗ Д. Матвеев юлташ вăрлăх тупма тивӗçлипе тăрăшмасть.

Районри партипе совет организацийӗсен клевер акмалли плана тултарас тӗлӗшпе кирлӗ мерăсем йышăнмалла.

В. Веселов.

Республика уйхирӗсенче

Трактор бригадисем ӗçе тухрӗç

ПЕРВОМАЙСКОЕ, апрелӗн 17-мӗшӗ. (Телефонпа). Тăпра пур çӗрте те типсе çитсе пырать. Ыран-паянах тырăсене акма массăллăн тытăнмалла. Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи çуракине лайăх тата хăвăрт туса иртернипе тухăçлă тырпул туса илессишӗн кӗрешеççӗ. Республика Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата иккӗмӗш преми илни çинчен калакан савăнăçлă хыпар колхозсенче çисӗмлӗн сарăлчӗ. Колхозниксемпе колхозницăсем 1943 çулта çӗнӗрен пысăк çитӗнӳсем туса ӗçлеме хавхаланаççӗ.

Молотов ячӗпе тăракан, «Красный луч», «Трудовик», «Парижская Коммуна» колхозсем çурхи тырăсем акма суха тăваççӗ, тăпрапа агротехника хушнă пек таран тата пӗр шăйрăк хăвармасăр сухалаççӗ, çийӗнчех сӳрелеççӗ, акаççӗ. «Красный луч» колхоз 18 гектар тырă акрӗ, «Трудовик», «Парижская коммуна» колхозсем тулă акма тытăнчӗç. «Красное Именево», «КИМ» колхозсем кок-сагыз акрӗç. Ача яслисем ӗçлеме тытăнчӗç, пур колхозсенче те пекех çураки тăвакансем валли столовăйсем ӗçлеççӗ. «Трудовик» колхозра суха тăвакансене, тата акакансене талăкра икӗ хутчен вӗри апат çитереççӗ.

Районри МТС 1943 çулхи çуракине тӗплӗн хатӗрленсе тухрӗ. Ӗнер тракторсем уя тухса сăнавлăн сухаласа пăхрӗç. 1-мӗш бригада пӗр гектар çурă, 6-мӗш бригада икӗ гектар сухаланă. Паян МТС-ăн 4 бригади колхозсен маларах типнӗ участокӗсене талкăшӗпех сухалама, акма тухрӗç. Малтанхи кунхи ӗç тракторсем лайăх ӗçленине кăтартрӗ. Тракторсем чарăнса тăни, тикӗс ӗçлеменни пулмарӗ.

П. Васильков.

Лайăх ӗçлеççӗ

ШАХАСАН, Анат Юнтапари Молотов ячӗпе тăракан колхоз, пӗтӗм çӗр лаптăкӗ типсе çитессине кӗтсе тăмасăр, суйласа илнӗ уйрăм участоксем çинче ака тума тытăнчӗ. Икӗ кун хушшинче 20 гектар ытла сӗлӗ акрӗ.

Çуракине тӗплӗн хатӗрленсе тухнипе колхозниксем ӗçе хастарлăн, хăвăрт туса пыраççӗ. Тырă акакансем. 9 çын, апрелӗн 13-мӗшӗнче пурте талăкри ӗç нормине 150—170 процент тултарчӗç. Иван Аристархов колхозник кунне 2,5 гектар, Андрей Федоров колхозник 2,2 гектар сӗлӗ акрӗç. Вӗсем икӗ кун хушшинче 5-шер ӗçкунӗ ӗçлесе турӗç. Суха тăвакансем Андреев, Иванов, Петров юлташсем те ӗç нормисене малтанхи кунах иртерсе тултарчӗç.

Суха тăвакансене ӗçлемелли участоксем çирӗплетсе панă. Çапла тунипе колхоз правленийӗ кашни сухаçă мӗнле ӗçленине куллен уйрăммăн тӗрӗслесе тăма пултарать. Сухаçăсем те ӗçе лайăх туса пыраççӗ. Тăпрана, агротехника кăтартăвӗсем тăрăх, таран сухалаççӗ, сухаланман вырăнсем пачах юлмаççӗ.

Çуракине тухнă малтанхи кунах бригадăсенче стена хаçачӗсем тухрӗç, хаçатсемпе журналсене уя илсе тухса ӗçлекенсене вуласа пачӗç. Колхозниксемпе колхозницăсем çуракине кăçал лайăх тата 7 кун хушшинче туса иртерессишӗн кӗрешеççӗ.

В. Веселов.

Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халăх Комиссариатӗнче

СССР Правительствипе Греци Правительстви хушшинче пулса иртнӗ калаçусем хыççăн килӗшӳ тунă. Вăл килӗшӳ тăрăх Совет Союзӗн Греци Правительстви çумӗнчи дипломатиллӗ представительствине тата Грецин СССР Правительстви çумӗнчи дипломатиллӗ представительствине иккӗшне те миссисенчен посольствăсем туса хунă.

Икӗ çӗршыв посланникӗсене те посол ячӗсем панă.

Краснодар районӗнчи сывлăшри çапăçусем

Апрелӗн 15-мӗшӗпе 16-мӗшӗнче нимӗç авиацийӗ Краснодар районне массăллăн вӗçсе пырса тапăннă. Пирӗн сывлăшри вăйӗсем вăл тапăннисене ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Икӗ кун хушшинче пирӗн самолетсем сывлăшри çапăçусенче нимӗçсен 67 самолетне персе ӳкернӗ. Çав вăхăтра пирӗн 30 самолет пӗтнӗ.

Май уявне çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илессишĕн!

С. КРЫЛОВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн оборона промышленноçĕнчи енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Пирĕн çĕршывра социализмлă ăмăрту пуçланăранпа кĕçех 14 çул тултарать. 1929 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче, сталинла пĕрремĕш пилĕкçуллăха кĕнĕ чухне, партин XVI конференцийĕ Совет Союзĕнчи ĕççыннисене социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма чĕннĕ.

Партин çак чĕнĕвĕ пирĕн халăх хушшинче пысăк çĕнĕлĕх пуçарчĕ. Ăмăрту пирĕн тăван çĕршывăн оборона тата экономикăллă вăйĕсене тĕреклетмелли, çынсене патриотла воспитани памалли питех те вăйлă хĕçпăшал пулса тăчĕ.

Халĕ те, отечественнăй асла вăрçă вăхăтĕнче, социализмлă ăмăртупа стахановла движени калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Социализмлă ăмăрту 14 çул тултарнă Сталин юлташ историллĕ приказĕ тухнăранпа пĕр çултала çитнипе пĕрле килет. Хăйĕн приказĕнче Сталин юлташ совет патриочĕсене фронта мĕнпур майсемпе пулăшса тăрассине Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма хавхалантарчĕ.

Иртнĕ çулхи май уйăхĕнчен вара совет тылĕ Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем, продовольствипе снаряжени туса кăларассине палăрмалла ÿстерсе пырать.

Социализмлă ăмăртура малта пыракан предприятисене, уйрăмах паллă çитĕнÿсем тăвакан ăмăрту участникĕсене Оборона Государственнăй Комитечĕн, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн, ВЦСПС-па Наркоматсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавĕсене парса хисеплеççĕ. Чăваш республикинчи промышленноçри предприятисенчен чылайăшĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн вунпĕр уйăхĕ хушшинче хисеплĕ ялавсене илсе пĕрре кăна мар тивĕçлĕ пулчĕ.

Хăçатсем халĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн вунпĕрмĕш уйăхĕнчи итогĕсене пичетлесе кăларма тытăнчĕç. Промышленноçри рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем, мĕнпур ĕççынни ăмăртăвăн вуниккĕмĕш уйăхĕнчи — апрель уйăхĕнчи производство планне тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Ăмăртакансем Май уявне уменхи социализмлă ăмăртăва тапхăрне кĕчĕç, Май уявне производствăллă çĕнĕ çĕнтерÿсемпе паллă тăвассишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешеççĕ.

Чăваш республикинчи пысăк предприятисенчен пĕрне хаклана чухне эпир малтанах Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завода палăртса пулать. Вăл плана пур енĕпе те уйăхран уйăхах тултарса пырать. 1942 çулăн программине завод 117,5 процент тултарнă. Кăçалхи февраль уйăхĕнче вăл планран ирттерсе 30 процент чухлĕ ытларах продукци туса кăларнă, иртнĕ çулхи февраль уйăхĕнче туса кăларнинчен 3,5 хут ытларах продукци панă. Заводăн февраль уйăхĕнчи ĕçне Тăван çĕршыв пысăккăн хакларĕ — завод коллективĕ ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ.

Завод март уйăхĕнче те лайăх ĕçлерĕ, кварталти тата уйăхри плана срокчен тултарчĕ. ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕ хăйсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне завод аллинчех хăварчĕç.

Завод дирекцийĕ, партипе профсоюз организацийĕсем çĕнĕ кадрсене вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Заводра ĕçлекенсен 80 проценчĕ — çамрăк кадрсем, вĕсен пысăк пайне инженерсемпе техниксем, заводри ватă рабочисем вĕрентнĕ.

Кунта конструкторсен коллективĕ те çине тăрса ĕçлет. Вăл кăларакан продукцие уйăхран уйăхах лайăхлаттарса пырать, рационализаторла ĕçсем туса ирттерет, продукци туса кăларассине ÿстерме майсем туса парать.

Канашри вагонсем юсакан завод (начальникĕ Поздняков, партбюро секретарĕ Сорокин, завком председателĕ Мосенко юлташсем) 1942 çулта, 1941 çултипе танлаштарсан, 3,7 хут ытларах продукци кăларнă. Унта ĕç тухăçлăхĕ 138 процента çитиччен ÿснĕ. Завод 1942 çула пысăк тупăшпа илнипе вĕçленĕ.

Власов юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен предприяти те лайăх ĕçлет. Унти пĕтĕм коллективăн 47,3 проценчĕ — стахановецсем, 23,9 проценчĕ — ударниксем.

Куславккапа Çĕмĕрле комбиначĕсем те пысăк ĕç туса ирттерчĕç. Вĕсем çĕнĕ продукци кăларас ĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртрĕç, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем тăрăх виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Çĕмĕрлери «Большевик» заводри партипе хуçалăх руководителĕсем рабочисен ĕçне тĕрĕс организацилесе, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, февраль уйăхĕнче начар мар результатсем кăтартрĕç, завод февраль уйăхĕнче ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăнма пултарчĕ, март уйăхĕнчи ĕçĕшĕн ăна пĕрремĕш вырăн тата ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пама йышăннă.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод та плана йĕркеллĕн пулса тăрать. Заводра ĕçлекенсен 75 проценчĕ — вырăнти национальноç кадрсем. Вĕсем завода Чăваш республикинчи колхозсенчен килнĕ, унта производствăн йывăр техникине вĕренсе алла илнĕ. Çак заводăн чи лайăх ĕçлекен 13 работникне ССР Союзĕн орденĕсемпе медальсене парса наградăланă.

Республикăри предприятисенче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту вăхăтĕнче чылай стахановецсем ÿссе çитĕнчĕç. «Çынсем типтерлĕрех, хастарлăрах, дисциплинăллăрах пулса тăчĕç, вăрçă ыйтнă пек ĕçлеме вĕренчĕç, хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнчи тата ăна хÿтĕлекенсем умĕнчи — Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен тивĕçне ăнланса илме тытăнчĕç. Хăйсен граждăнла тивĕçне ăнланман çынсем, çапкаланчăк та сÿрĕк çынсем сахалланнăçемĕн сахалланса пыраççĕ. Хăйсен граждăнла тивĕçне ăнланакан çынсен организованноçĕпе дисциплини çирĕпленнĕ çемĕн çирĕпленсе пырать» (Сталин).

Рабочисем ваккавлă задани илнĕ хыççăн, темиçе смена хушши цехран тухмасăр ĕçленине чылай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Акă Куславкка комбиначĕнчи стахановец Розен юлташах илер. Вăл виç-тăватшар смена цехран тухмасăр ĕçлет, ĕç нормине тăтăшах 350—370 процент тултарса пырать. Стахановецсем Хельсинг, Левченко, Мореплавцев (Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завод), Афонин, Посадин, Маркелов (Левин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завод), Канашри вагонсем юсакан заводри Быков, Демкин, Федотов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем, — çаксем пурте вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсемпе, фронтри пек ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, республикăри предприятисенче ĕçлекен чи лайăх производственниксене 262 çынна хисеплĕ грамотăсем парса наградăланă. Çакă вăл — вĕсен малта пыракан отрячĕ çеç-ха, хыçĕнче чаплă стахановецсен пысăк çарĕ тăрать.

Партин заводсенчи организацийĕсем халĕ производствăпа ытларах интересленекен пулчĕç, массăсем хушшинчи партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатрĕç. Коммунистсем хăйсем пример кăтартса, рабочисене, инженерла-техникла работниксене йывăрлăхсене çĕнтерме, продукци кăларассине малалла ÿстерсе пыма мобилизацилеççĕ.

Республикăри промышленноçăн ертсе пыракан отраслĕсем ăмăртура пысăк çитĕнÿсем турĕç. Анчах эпир продукци туса кăларассине малалла ÿстерсе пырас тĕлĕшпе мĕнпур резервсемпе майсене ĕçе янă тесе калама пултараймастпăр. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн участникĕсен продукци туса кăларассине малалла сарса пыма питех те пысăк ресурссем пур.

Канашри вагонсем юсакан завод 1942 çулта темиçе миллион тупăш илчĕ. Анчах çак заводра халĕ те сĕрккăмрăкне ытлашши çунтарассине, брак тунă пирки тăкак курассине пĕтермен-ха. Иртнĕ çул кунта станоксем пĕтĕм ĕç вăхăчĕн 23 процентчĕ чухлĕ ĕçлемесĕр тăнă. Завод 1942 çулăн вĕçĕнче тата кăçалхи пĕрремĕш кварталта хăйĕн ĕçне сÿрĕклетрĕ, малти вырăна çухатрĕ. Заводри партипе комсомол, профсоюз организацийĕсем, завод руководстви тата пĕтĕм коллектив халĕ, Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пынă вăхăтра, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, Май уявĕ тĕлне республикăри малта пыракан предприятисем хушшинче хисеплĕ вырăн йышăнма тивĕç.

Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводра та браксем чылай пулаççĕ. Унта материалсемпе инструментсене перекетлес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле-ха. Левин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводра кăçалхи январь уйăхĕнче станоксем пĕтĕм ĕç вăхăчĕн çуррийĕ чухлĕ ĕçлемесĕр тăнă.

Çакăн евĕрлĕ тĕслĕхсем ытти предприятисенче те сахал мар. Вĕсем фронта пулăшас ĕçре усă курман майсем пирĕн татах та нумайййине кăтартса параççĕ.

Перекетлĕх режимне тытса пырас ĕçре малтанхи утăмсене кăна тунă-ха.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн тĕп задачисенчен пĕри — металлпа чĕртаварăн кашни килограмне, топливопа электроэнергие, ĕç вăхăчĕн кашни минутине çирĕппĕн перекетлесе пырасси тивĕçлипе пурнăçа кĕрсе пымасть-ха. Изобретенипе рационализаторла ĕç те кирлĕ пек пулса пымаççĕ. Ку ĕçе чылай заводсенче изобретательсен бюровĕнче ĕçлекенсене çеç шаннă. Партипе профсоюз организацийĕсем çак ĕç тавра производствăра ĕçлекенсен анлă массисене мобилизацилемен-ха. Рационализаторла сĕнÿсем паракансен хисепĕ пирĕн заводсенче пĕрерĕн кăна шутланаççĕ-ха. Партиллĕ-массăллă ĕçĕн çак участокĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхни — государствăна миллионшар тенкĕ укçа перекетлесе хăварнă пулĕччĕ, фронт валли продукци ытларах панă пулĕччĕ. Парти организацийĕсен перекетлĕх режимĕ пурнăçа кĕрсе пынине куллен контрольлесе тăмалла, вĕсен завод руководителĕсене производство ресурсĕсене перекетлĕн расходлама вăйлăн пулăшса тăмалла.

Ăмăртакансен тепĕр пысăк задачи — предприятисене пĕр тикĕс ĕçлеттерессе пулса тăрать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене уйăхран уйăха туса пыни предприятисене пĕр тикĕс ĕçлеттерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнчĕ. Анчах плана уйăхран уйăха çеç мар, ăна вунăкунлăхран вунăкунлăха тата пур йышши таварсем енĕпе те çирĕппĕн пурнăçласа пырассишĕн, кашни кунхи графика çирĕппĕн пăхăнса пырассишĕн кĕрешмелле, урăхла каласан, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ хушнă пек ĕçлемелле.

Ку тĕлĕшпе Бунин юлташ директор заместителĕ пулса тăракан завод лайăх енчен палăрса тăрать пулсан, республикăри чылай предприятисем юлса пыраççĕ-ха. Вĕсем плана тикĕс пурнăçласа пыраймаççĕ-ха, кивĕлле ĕçлеççĕ — уйăх пуçламĕшĕнче канаççĕ, кайран вара хыпаланса ÿкеççĕ, çакă вара производство тикĕс ĕçлессине пăсать, оборудованипе тĕрĕс мар усă курасси тата ăна вăхăтсăрах пăрахăçа кăларасси патне илсе пырать.

Тикĕс ĕçлесси производствăна планлас ĕçпе таччăн çыхăнса тăрать. Кашни кунхи графика оборудовани тата ĕç вăйĕ çине уйăх хушшинче тивекен ĕçе шута илсе тумалла. Тикĕс ĕçлессине процентсем тăрăх çеç мар, продукци мĕн чухлĕ кăлармаллине кăтартакан цифрăсемпе те палăртса хумалла. Ку тĕлĕшпе Бунин юлташ директор заместителĕ пулса тăракан заводăн опытне сĕнме пулать. Унта йывăр тата ĕç вăйĕ нумай ыйтакан таварсене туса кăларассине малтанхи вунăкунлăхра туса кăларма планлаççĕ, çакă вара уйăх вĕçĕнче те тикĕс ĕçлеме майсем туса парать. Предприятисем тикĕс ĕçлеччĕр тесен, чĕртавар парса тăракансемпе тачă çыхăну тытса тăрас пулать.

Электроэнергие перекетлес ыйту çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Электричество халĕ предприятисен ĕçĕнче ăнăçлăха татса паракан участок пулса тăрать.

Электроэнерги туса кăларас ĕçре йывăрлăхсем пурри курăнсах тăрать. Çавăнпа электроэнергин кашни киловатне перекетлесси — партипе хуçалăх руководителĕсен пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать. Чылай предприятисенче çакна пурнăçламаççĕ. Ку çеç те мар-ха, хăшпĕр предприятисем хăйсене электроэнерги панă нормăна пăхăнмаççĕ. Çакă вăл ытти предприятисен ĕçне начарлатнинче çеç мар, электростанци ĕçĕнче те палăрать. Электроэнергие тирпейсĕр расходлакансене хирĕç, ку ĕçре чăрмантаракансене хирĕç вăйлăн кĕрешмелле. Парти организацисен руководителĕсен ку ĕçе хăйсен тимлĕн ертсе памалла, çак ыйту тавра массăллă-политикăллă ĕçе анлăн туса пымалла.

Майăн пĕрремĕшне производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илесси, ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласси, ăмăртура тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе, иккĕмĕш кварталти производство планне тата 1943 çулти плана ирттерсе пурнăçлассишĕн кĕрешесси — Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн участникĕсен, республикăри промышленность предприятийĕсен коллективĕсен, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен хисеплĕ задачи пулса тăрать.

АРМАНСЕНЕ ХАЛЕХ ЮСАМАЛЛА

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн 3 çилармане пур. Вĕсем çулталăк хушшинче колхоза 65-шер пин тенкĕ тупăш парса тăнă. 1941 çулта вăйлă çил вăхăтĕнче, астуман пирки, колхозăн икĕ çиларманĕн çуначĕсене çĕмĕрнĕ. Çак армансене колхоз халĕ те юсаман. Çунатсене юсама кирлĕ йывăçа тата материалсене хатĕрленĕренпе çулталăк иртрĕ.

Колхоз правленийĕн армансене халех юсама тытăнмалла.

Н. Виноградов.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Наркомпищепром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри апат-çимĕç промышленноçĕн работникĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнна хыççăн уйăхран-уйăха хăйсен предприятийĕсен ĕçне лайăхлатса пынине палăртнă.

1943 çулхи март уйăхĕнче ЧАССР Наркомпищепромĕн предприятийĕсем уйăхри плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе 22 процент ирттерсе тултарнă, Хĕрлĕ Çар валли çĕрулми тата пахча-çимĕç типĕтмелли сезонри задание пурнăçа кĕртнĕ.

Малта пыракан темиçе предприяти — Кувакинăри тата Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕсем, Çĕмĕрлери тата Шупашкарти армансем тата ытти те, вырăнти чĕртаварăн тата производство отхочĕсен ресурсĕсемпе пĕлсе усă курса, çĕршыва планран ирттерсе вуншар тонна апат-çимĕç продукчĕсем туса пачĕç.

Совнарком март уйăхĕнче **Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ** (управляющийĕ Жоров), **Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ** (управляющийĕ Захватова), **Çĕмĕрлери арман** (директорĕ Коновалов), **Шупашкар хулинчи арман** (директорĕ Бочков) тата **Шупашкарти макарон фабрики** (директорĕ Столяров) **лайăх ĕçленине** палăртнă.

Совнарком кунпа пĕрлех март уйăхĕнче Вăрмар районĕнчи Кавал крахмал завочĕ (директорĕ Ковалевский), Пăрачкаври арман (директорĕ Иванов), Куславккари кондитерски мастерской (заведующийĕ Кудрявцев) тата Элĕк районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ çителĕксĕр ĕçленине палллă тунă.

Чăваш АССР-чи апат-çимĕç промышленноçĕ крахмалпа сагă тата ытти питех те кирлĕ хăшпĕр продуктсене туса кăлармалли плана тултарман; предприятисем хăйсен чĕртавар тата продовольстви базисене тăвас тĕлĕшпе те пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Совнарком апат-çимĕç промышленноçĕн работникĕсене Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăйпа хутшăнса, типĕтнĕ крахмал, сагă туса кăларас тата подсобнăй хуçалăхсене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

Инвалидсен кооперацийĕн ăмăртура мала тухакан артелĕсене пама ЧАССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тăвасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ çапла йышăннă:

1. Инвалидсен кооперацийĕн ăмăртура мала тухнă артелĕсене пама Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тăвас;

2. ЧАССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавĕпе пĕрле 10.000 тенкĕ награда памалла тăвас тата малта пыракан артельсене пама икĕ премин тăвас: пĕрремĕш преми — 8.000 тенкĕ, иккĕмĕш преми —7.000 тенкĕ;

3. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçсе çÿрекен Хĕрлĕ ялавне парас йĕркене инвалидсен кооперацийĕн артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсемпе тата Чăваш АССР Совнаркомĕн 1942 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕпе килĕштерсе тăвас.

КОЛХОЗНИКСЕМ ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

СОВЕТСКОЕ. Анаткасри «Октябрь» колхоз фронтовиксен 98 çемьине выльăх апачĕ панă, выльăхсем туянма пулăшнă. 57 çемье сысна çури, 3 çемье пăру тата 11 путек туяннă.

Эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесене колхоз сысна çурисем панă, вутă туянма пулăшнă. Çар çыннисен çемьисене 287 кубометр вутă турттарса панă.

Фронтовиксен çемьисен пурнăç условийĕсене лайăхлатнă çĕре колхозниксем те активлăн хутшăнаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем 22 метр пир, 12 мăшăр тăла пухса пачĕç.

Колхоз фронтовиксен çемьисене продовольстви парса тăрать, кăçал пĕтĕмпе 24 центнер тырă парса пулăшнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах колхоз председателĕ Н. Кириллов юлташ тимлĕн ĕçленине палăртмалла.

Мăн Чурашри «Прогресс» колхозри пулăшу касси фронтри юлташсен çемьисене пулăшма 72 центнер тырă уйăрса хунă. Правлени эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене тата фронтовиксен çемьисене 8 пăру, 8 путек, 11 сысна çури тата ытти выльăхсем те парса пулăшрĕ. Выльăх-чĕрлĕх апачĕсене çителĕклех валеçнĕ. Чылай çемьесене вутă турттарса панă. Икĕ çемьене таса та çутă хваттерсене вырнаçтарнă. Колхозра çак кунсенче çĕвĕ çĕлекен, атă-пушмак тата çăпата тăвакан мастерскойсем уçаççĕ.

Я. Сигай.

ШКУЛ ПУРНĂÇĔ

Шкулти дисциплина çирĕпленет

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Кушарти пуçламĕш шкулта ачасене кирлĕ таран пĕлÿ парассишĕн çине тăрсах ĕçлеççĕ. Çакăн пек тăрăшни хăйĕн результатне парать. Вĕренĕве явăçтарнă 114 ачаран 45-ĕшĕ отличниксем. Ыттисем вара ударниксем тата вĕренÿре вăтам ĕлкĕрсе пыракансем. Вĕренÿ çулĕн малтанхи, чĕрĕкĕнче 7 ача ĕлкĕрсе пырайман. Учительсем вĕсене пулăшу парас тесе мĕн тума май пуррине пурне те тунă. Шкул заведующийĕ Н. Скворцов, О. Ивановăпа Ф. Тимофеева учительницăсем уроксем пĕтнĕ хыççăн вĕренÿре юлса пыракан ачасем патне килĕсене çÿренĕ, вĕсене пулăшас пирки ашшĕ-амăшĕсемпе калаçнă.

Н. Скворцов.

Иккĕмĕш класра вĕренекен И. Николаев урокра итлесе ларман. Вĕренÿре те начар паллăсем илнĕ. Юлашкинчен Тимофеева учительница унпала чылай вăхăт хушши уйрăм калаçусем ирттернĕ, амăшпе те калаçса пăхнă. Çакăн хыççăн Николаев вĕренÿре юсаннă. Халь вăл начар паллăсем илмест, алхасмасть, уроксене те тимлĕн итлесе ларать.

Ачасем хăйсен учителĕ пулнă, халĕ фронтра минометчик пулса фашистсене хирĕç çапăçакан Аркадий Афанасьевич Афанасьев патне çыру çырчĕç, «отлично вĕренĕпĕр, фронта хамăрăн вăйсем çитнĕ таран пулăшăпăр» тесе сăмах пачĕç. Афанасьев юлташ ачасем патне ответлă çыру ячĕ. Вăл çапла калать: «Ачасем, эсир шкулта тăрăшса вĕренĕр. Вĕренни пур çĕрте те кирлĕ. Эпир кунта, фронтра, фашистсен пуçĕсем çине мина хыççăн мина кăларса ярса, вĕсене хĕрхенÿсĕр çĕмĕретпĕр. Манăн минометран тухса каякан кашни мина çирĕн телейлĕ пурнăçа сыхлама пулăшать, гитлеровецсене вилĕм кÿрет».

Учительсем тăрăшнипе тата фронтовиксемпе çыхăнса ĕçленипе, геройсен ĕçĕсем çинчен ачасене яланах каласа панипе, ачасен дисциплини те, вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси те чылай ÿсрĕ.

Иккĕмĕш класра ачасем вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси, пĕрремĕш чĕрĕкпе танлаштарсан, 12,5 процент ÿснĕ. Пĕтĕм шкулĕпе илсен, ачасен 96,7 проценчĕ вĕренÿре ĕлкĕрсе пырать. Ачасем шкула кун сиктермесĕр çÿреççĕ. Ку ĕçе аванлатас майпа шкулта 114 ача валли буфет уçнă. Шкула çÿреймен тăлăх хĕрачана — Е. Осиповăна шкул укçипе пальто çĕлетсе панă. Кунсăр пуçне 12 ачана йÿнĕ хакпа, хăйсен материалĕпе мастерской урлă пальтосем çĕлесе панă, виçĕ ача валли урана тăхăнмаллисем илнĕ.

Ачасен чĕрисем фронта пулăшас кăмălпа çунаççĕ. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 583 тенкĕ, самолетсен «Комсомол Чувашии» ятлă эскадрильине тума 782 тенкĕ пухнă, Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем ярса панă.

Шкул ачисемпе пионерсем колхоза çуракине хатĕрленме те пулăшаççĕ. Кашни ача колхоз валли виçшер витре кĕл пухса панă.

Шкулти ачасен юрăпа ташă группи икĕ ялта концерт лартса панă. Шкул ачисене физкультурăпа спорт ĕçне вĕрентесси те начар мар пулса пырать. Комсомолецсемпе профсоюз членĕсен кросне хутшăнса 40 ача БГТО значокĕсене илме нормăсем пачĕç.

Шкулти вĕренÿпе дисциплина ÿссе лайăхланса пыни пĕтĕмĕшпех шкул заведующийĕ Н. Скворцов, учительницăсем Тимофеева, Иванова юлташсем тăрăшса ĕçленинчен килет.

С. Шадин.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англин пĕрремĕш армийĕ кĕрешекен вырăнта союзниксем Меджез—Эль-Бабран çурçĕртерехре тытса илнĕ высотана тăшман темиçе хут та ăнăççăр атакăланă.

Франци войскисем апрелĕн 14-мĕшĕнче Карачумран çурçĕр еннелле куçса пынă. Джебель—Усселата йышăнса илнĕ вăхăтра 23 оруди, 22 мортира тата 11 пулемет тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшман аэродромĕсем çине, танксем çине тата мототранспорт çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем нумайĕшĕ тÿрех лекнĕ.

«Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Роммель итальянецсем çине çав тери мăшкăлласа пăхать. Фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче итальянецсен нумай чаçĕсене пĕтме пăраха-пăраха хăварнă. Çакна ĕнтĕ эвакуаци тумалла пулсан итальянецсене Сицилие е материк çине куçармалла ан пултăр тесе тăваççĕ пулмалла.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин истребительнăй авиацийĕ тăшман оккупациленĕ территорире тĕрлĕ объектсем çине тата çурçĕр-хĕвеланăç Германири чугунçул транспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă. 12 чугунçул составне ытла атакăланă, вĕсенчен нумайĕшне сиен кÿнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Германи çине вĕçсе пырса тапăнни çинчен тĕплĕнтерех пĕлнĕ. Курнă çынсем каланă тăрăх, Берлин çине бомбăсем пăрахнине пула хулан пур районĕсенче те аркану нумай пулнă. Виктория—Луиза площачĕ, Прагераллея тата Кайзераллея хушшинчи виçкĕтеслĕхре пур çуртсене те тенĕ пекех аркатса тăкнă. Хула тулашĕнчи промышленность предприятийĕсенчен нумайĕшĕнчен кирпĕч стенисем çеç тăрса юлнă. Юлашки виçĕ хут пырса тапăннă вăхăтра хулара 3,5 пин çынна яхăн вилнĕ, 7,5 пин çын аманчĕ. Штуттгардт хулинче юлашки хут тапăннă вăхăтра çав тери вăйлă пушарсем тухнипе хура тĕтĕм пин фут çÿлелле хăпарнă.

Италин Специри тинĕс базине тапăннă вăхăтра карапсем тăвакан тата юсакан заводсене нумай сиенленĕ.

ГЕНЕРАЛ ВИЛЬСОН АНКАРА ХУЛИНЕ ПЫРСА ÇИТНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Турцин генеральнăй штабĕпе калаçма Анкарана Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ генерал Вильсон хăйĕн штабĕн офицерĕсемпе пĕрле пырса çитнĕ. Паян вăл Турцин çар руководителĕсемпе калаçма пуçланă.

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чузашская ур., 6) пропагандистсемпе агитаторсем валли лекци пулать. Лекци теми: **«Хĕрлĕ Çарăн маневрлă тактики тата унăн çар мастерлăхĕ ÿсни».**

Лекцие лектор Можнин юлташ вуласа парать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти макарон фабрикине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: механик, электромонтер, кочегарсем, печниксем, снабжени начальникĕ.

Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Фабрикăра столовăй, апат-çимĕç ларекĕ тата общежити пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 29, Макарон фабрики, кадрсен пайĕ.

2—1

14-мĕш номерлĕ почта ешĕклĕ объекта гл. бухгалтер, счетовод, экономист, кадрсем енĕпе тата мобилизаци енĕпе ĕçлекен инспектор, слесарьсем, электромонтерсем, машинистсем, электросварщиксем кирлĕ.

6—02 номерлĕ телефонпа (икĕ звонок) 8 сехетрен пуçласа 10 сехетчен тата 17 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать. 5—1.

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуçалăхĕнче ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Пĕчченнисене общежити параççĕ, столовăй пур, кашнине хăйшĕн пахча-çимĕç лартса тума çĕр участокĕ параççĕ.

Шупашкарти энергетика техникумĕ

Строительнăй техникум пулнискер, çакăн çинчен пĕлтерет: техникума заявленисем памалли срока апрелĕн 20-мĕшĕччен тăснă, испытанисем апрелĕн 21-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Вĕренме илмелли условисене „Красная Чувашия" хаçатра мартăн 21-мĕшĕнче, „Чăваш Коммуни" хаçатра апрелĕн 7-мĕшĕнче пичетленĕ.

Дирекци.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ЧТ 327. Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.